3032 41-127

Л. МИНОВ

# ПАРАШЮТ ÇУЛĔ



ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

Л. МИНОВ

# ПАРАШЮТ ÇУЛĔ

Обязательный
контрольный
экземпляр

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

## МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ

Парашют тесе çӳлтен ӳкекен япаласен хăвăртлăхне вăрахлатмалли аппарата калаççĕ. Унăн ячĕ француз сăмахĕ chute (шӳте—ӳкни) тенипе para (пара—хирĕç) приставкăран пулнă. Вăл „ӳкĕве хирĕç" тенине пĕлтерет.

### Парашют пуçланса кайни тата унпа чи малтан сикнисем

Парашют идейине XV ĕмĕрĕн юлашки çулĕсемпе XVI ĕмĕр пуçламăшĕнче пурăннă чаплă ученăй тата художник итальянец Леонардо да-Винчи чи малтан каласа панă.

„Çын купол евĕрлĕ çавралатса карăнтарнă пир хатĕре, кашни енĕ вуникшер чикĕ тăршшĕскере, тытса ним хăрамасăрах тем çӳллĕшĕнчен сикме те пултарать", тесе çырнă вăл 1495-мĕш çулта.

Леонардо да-Винчи 1452—1519 çулсенче пурăннă. Вăл хăй парашют çинчен шухăшланине пурнăçа кĕртеймен, анчах çак генилле ăслă çынăн ытти вĕçмелли машинăсен ӳкерчĕкĕсем хушшинче парашют эскизĕ усраннă (1 ӳк.).

Леонардо да-Винчи вилнĕ хыççăн çĕр çултан вăл парашют çинчен каланă шухăшсене Фауст Верначио венецианец малалла янă. Вăл теори енĕпе ыйтăва сӳтсе-явса, плансем тунă çеç мар, вăл тăвата кĕтеслĕ примитивлă парус-парашют тунă. Унпа вăл 1617çулта Венецире пĕр пысăках мар башня çинчен сиксе çĕре аннă.

*Çакă этемлĕхĕн историнче пĕрремĕш хут парашютпа сикни пулнă* ( 2 ӳк.).

Çĕр утмăл çултан физик *Ленорман* лайăххах, конус евĕрлĕ хытă тăрăллă парашют туса, темиçе хутчен сиксе аннă (3 ӳк.).

1783 çулта, декабрĕн 26-мĕшĕнче, Ленорман хăйĕн парашючĕпе пĕр хутлă çурт тăрринчен сикнĕ тата 3 кунтан, декабрĕн 29-мĕшĕнче, вăл Францин Монпельери çӳллĕ обсерватори шпицĕ çинчен парашютпа сиксе аннă.



1 ўк. Леонардо да-Винчи 1495-мӗш ҫулта ӳкернӗ парашют эскизӗ.

## Парашютпа практикăра усă курма тытăнса пăхни

Ленорман парашютпа сикнисем сывлăшра вĕçес ĕç тапранса аталанса пынă саманара пулнă. Çав тапхăрта тĕтĕм тултарнă сывлăш шарĕсем (монгольфьерсем) этемлĕх çĕр туртăм вăйне çĕнтерес тĕлĕшпе пысăк çĕнтерÿсем тунине кăтартса панă.

Каярахпа вĕсем вырăнне шалъерсем — газ (водород) тултарнă сывлăш шарĕсем шухăшласа кăларнă. Пиншер çул хушши çĕр çумĕнчен çĕкленеймен, çĕр çумне çыхăнса ларнă этем çакăн хыççăн вара сывлăш океанĕн вĕçĕ-хĕррисĕр анлăшĕнче ирĕккĕн ярăнса çÿреме тытăннă.

Сывлăшра вĕçессин çак авалхи тапхăрĕнче парашютпа усă курса çăлăнмалла тăвас тесе чи малтан тытăнса пăхнă.

1784 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче Парижри Марс уйĕнче французсен вĕçевçи *Бланшар* парашютлă пысăк сывлăш шарĕпе вĕçнĕ. Кун пек пысăк шарпа чи малтан çав *Бланшар* вĕçнĕ. Парашючĕ пысăк зонт пек, хытă каркаслă пулнă. Ăна çапла сарса хунипех сывлăш шарĕ çумне çыхăнтарнă. Ун айне аэро-



2 ӳк. Верначио хӑйӗн парашючӗпе сикни.

навт корзинине ҫакса янӑ (4 ӳк.). Вӗҫерсе яма кирлӗ пулсан, вӗҫевҫи парашюта сывлӑш шарӗнчен уйӑрса, унпа ҫӗр ҫине анма пултарнӑ.

Анчах практикӑра чылай ҫулсем хушши парашютпа выльӑх-чӗрлӗхе тӗрлӗ ҫӳллӗшрен антаркаланипе ҫеҫ ҫырлахкаланӑ темелле. Бланшар вӗҫевҫӗ, 1785 ҫулхи июлӗн 3-мӗшӗнче, пӗчӗк парашютпа 500 метр ҫӳллӗшӗнчен кушака антарнӑ. Кушакӗ чиперех ҫӗр ҫине анса тӑнӑ. Ҫавнашкалах Бланшарӑн йытти те октябрӗн 3-мӗшӗнче 600 метр ҫӳллӗшӗнчен парашютпа аннӑ. Вӑлах тепӗр ҫулне те темиҫе хутчен ҫак тӗлӗнмелле сӑнавлӑ ӗҫре пулнӑ.

Каярахпа, 1797 ҫулхи октябрӗн 22-мӗшӗнче, Парижра ҫамрӑк француз вӗҫевҫи *Гарнерен историре пуҫласа сывлӑш шарӗ ҫинчен парашютпа сиксе аннӑ.*

Гарнерен вӑхӑтӗнче пулӑннӑ ҫын ҫав интереслӗ событи ҫинчен акӑ мӗнле ҫырнӑ:

„1797 ҫулхи октябрӗн 22-мӗшӗнче, 5 сехет те 28 минутра каҫхине, Монсо паркӗнче гражданин Гарнерен сывлӑш шарӗпе ҫӗкленчӗ. Пухӑннӑ ҫынсем хушшинче темле ҫӳҫентере-



3 ўк. Ленорман парашюччĕ анна чухне.

кен шăплăх пуçпулса тăчĕ, пичĕсем çинче татах интересленни те, çав хушăрах хăраса хытса тăни те палăрнă. 700 метр çӳллĕшне çĕкленсен, вăл хăйĕн парашючĕпе корзинине аэростат çумне çыхăнтарнă пăявĕсене касса татрĕ. Аэростачĕ çурăлса кайрĕ, гражданин Гарнерен парашютпа хăвăрттăн ана пуçларĕ, хăй енчен енне çав тери хытă сулланать, пухăннисем хăранипе çухăра-çухăра ячĕç, хăшпĕр çемçешкерех хĕрарăмсем ăнсăр пулса ӳкрĕç. Çав вăхăтра гражданин Гарнерен хире анчĕ, ут утланса Монсо паркне, хыттăн шавласа, çамрăк аэронавтăн таланчĕпе тата хăюллăхĕпе çав тери хавасланнине кăтартакан вĕçĕ-хĕррисĕр халăх хушшине таврăнчĕ".

Гарнерен сывлăш шарĕ çинчен хăйĕн парашючĕпе часах тата икĕ хутчен аннă. Вăл тунă парашютăн конструкцийĕ Верначиопа Ленорманăн примитивлă парашючĕсенчен чылаях урăхла пулнă. Тул енчен пăхма тата уçăлас (сарăлса каяс) принципĕ тăрăх вăл парашют хальхи парашютсем евĕрлĕрехех пулнă (5 ӳк.).

## Парашют спорт ĕçĕнче

Гарнерен çавăн пек хăюллăн сикни аэронавтсене усă курма парашют лайăхах юрăхлă



4 ӳк. Бланшар 1784 ҫулхи мартӑн 2-мӗшӗнче парашютлӑ сывлӑш шарӗпе вӗҫни.

иккенне кăтартса панă. Вăлах тата парашют спортне пуçласа янă та, малалла вара çав спортпа тĕнчери мĕнпур çĕршывсенче пĕр çĕр çул хушши ытла питĕ хытă интересленнĕ.

Халăх пухăвĕсемпе уявĕсем вăхăтĕнче сывлăш шарĕсем çинчен пурне те тĕлĕнтермелле сиксе кăтартас шутпа, тем чухлĕ фокусниксемпе сывлăш акробачĕсем парашютпа усă курнă. Час-часах тата парашютпа аннă вăхăтра тĕрлĕрен трюксем, фокуссем туса аппаланнă, парашют çумне трапеци пекки çакса ярса, ун çинче тĕрлĕ упражненисем тунă т. ыт. те. Вăл вăхăтсенчи парашютист-спортсменсенчен *Елизавета Гарнерена* асăнса хăварма тивĕç. Вăл чи малтанхи парашютист Гарнерен тăванех, ун йăмăкĕн хĕрĕ пулнă. 1812—1820 çулсем хушшинче вăл тĕрлĕ условире тĕрлĕ çÿллĕшрен парашютпа пурĕ 40 хутчен сикнĕ.

Робертсон, Кокинг, Болдуин, Лерукс, Хоган тата Кет Паулюс—акă XIX ĕмĕрти чи паллă парашютистсен ячĕсем.

Парашютпа çав тери хăюллăн сиксе кăтартнисемсĕр пуçне, вĕсем çав сывлăшран йывăр вĕçмелли аппарата — парашюта — лайăхлатас



5 ӳк. Гарнерен парашючӗ (1797 ç.).



6 ӳк. XIX ӗмӗр вӗҫӗ тӗлнелле спортсмен-парашютистсем сывлӑш шарӗсем ҫинчен сикни.

енӗпе те чылай ӗҫленӗ. Вӗсен парашючӗсен конструкцийӗ хальхи парашютсеннинчен нимпе те уйрӑм мар теме те юрать. Спорт парашютизмӗ сарӑлнӑ тапхӑрти парашютсен ӑрасналӑхӗ ҫакӑ пулнӑ: парашюта ранеца пуҫтарса хуман, тӳрех сывлӑш шарӗ ҫумне тӑсса ҫакса янӑ тата кӗлетке ҫумне ҫыхмаллисем пулман, ун вырӑнне унка ҫех пулнӑ, парашютист ҫав ункӑран тытӑнса аннӑ (6 ӳк.).

Сывлӑш шарӗсене лайӑхлатса ҫитернӗ май сывлӑшра вӗҫессин хӑрушлӑхӗ те сахалланнӑ. Вӗҫевҫӗсем ҫавӑнпа та парашюта, сывлӑш шарӗ ҫинчен сиксе ҫӑлӑнмалли аппарата, питех хисепе хуман. Ерипенех спорт ӗҫӗнче те парашютран сивӗне пуҫланӑ. Ҫапла, XX ӗмӗр пуҫламӗш тӗлнелле парашюта аэронавтика историн архивне панӑ теме те тивӗҫ пек пулса тӑнӑ.

## ПАРАШЮТ—ÇĂЛĂНМАЛЛИ, ЎКСЕ ВИЛЕСРЕН ХĂТĂЛМАЛЛИ АППАРАТ

### Авиаци ĕçĕ хытă сарăлнă тапхăрти парашют

XX ĕмĕр этемлĕхе сывлăш стихийĕпе кĕрешес ĕçре çĕнĕ çĕнтерў кўчĕ. Райтсем Орвильпе Вильбур — пиччĕшĕпе шăлнĕ — двигатель лартса, ун вăйĕпе вĕçекен тата ăçталла вĕçес тенĕ унталла тытса пымалла аэроплан тунă. 1903 çулта вĕсем çав аэропланпа пĕрремĕш хут вĕçнĕ.

Хăйсен вĕçевĕпе Райтсем хальхи чаплă авиаци историн малтанхи страницисене çырса хунă. Çавăнтан вара авиаци ĕçĕ калама çук хăвăрт аталанса пынă. Вăл этемĕн вăхăт, хăвăртлăх тата инçет представленийĕсене те пачах улăштарнă. Анчах ку çĕнтерў те ахалех

килмен, этемлӗхе вӑл хакла ларнӑ: сывлӑш стихийӗне хирӗç кӗрешсе ӑна çӗнтерессишӗн сахал çын пӗтмен. Авиаци техникин çӗнӗрен çӗнӗ ӳсӗмӗсем çинчен пӗлтерекен хыпарсемпе пӗрлех, хӑюллӑ та хастар авиаторсем пӗтни çинчен пӗлтерекен траурлӑ хыпарсем, пӗр вӗçӗмсӗр тенӗ пекех, килсе тӑнӑ.

Авиацин çак героикӑлла тапхӑрӗнче çынсем парашютпа каллех пит те интересленме кирлӗ пулнӑ пек. Вӑл авиаторсене инкек-синкек тухсан, аэропланпа пӗрле пӗтесрен сиксе хӑтӑлмалли, час-часах усӑ курма тивӗçлӗ хатӗр выранче шутланма кирлӗ пулнӑ пек. Çав вӑхӑтрах çак этем тахçанах шутласа кӑларнӑ аппарата—çӑлӑнмалли хатӗре—авиаци ӗçӗпе интересленекен çынсем аса та илмен. 1914—1918 çулсенчи тӗнче вӑрçиччен кӑшт маларах çех хӑшпӗр конструкторсем парашюта лайӑхлатса, унпа авиацире усӑ курмалла тӑвас тӗлӗшпе ӗçлеме тытӑннӑ.

1912 çулхи мартӑн 1-мӗшӗнче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Сан-Луи ятлӑ хулинче Берри американец самолет çинчен парашютпа сикнӗ. Унччен самолет историнче парашютпа усӑ курни пулман. Çав вӑхӑталлах Францире,

унтан ытти çĕршывсенче те, самолет çинчен парашютпа сиксе пăхма тытăннă.

Анчах, самолет çинчен парашютпа сикекенсем йăнăçлах çĕре аннă пулин те, ун чухнехи летчиксем парашют çине шансах кайман. Ăна чĕркеме кансĕрри, йывăрри тата усă курас енĕпе те шанчăклах мар пек туйăнни парашютпа авиацире сарлакан усă курассине чăрмавласа пынă. Темиçе çул хушши парашютпа сăнавсем, экспериментсем çеç туса иртернĕ.

## 1914—1918 çулсенчи тĕнче вăрçинче парашютпа усă курни

1914—1918 çулсенчи тĕнче вăрçи вăхăтĕнче кăкарса янă сывлăш шарĕсем вăйлă сарăлнă. Аэростатсене канатпа кăкарса, урапа çине чĕркенĕ каначĕсене сӳтсе пырса, çӳле çĕклентернĕ те вĕçертсе яман, кирлĕ вăхăтра туртса антарнă. Фронтсенче çавăн пеккисемпе вăрçă епле пынине, тăшманăн вăйĕсемпе артиллерийĕ ăçта тăнине сăнанă, артиллерие ăçта пемеллине кăтартса пынă.

Аэростатсем чăсăкрах, тултармăш евĕрлĕрех пулнă пирки, вĕсене вырăсла „колбаса“




7 ӳк. 1914—1918 çулсенчи тĕнче вăрçи вăхăтĕнче парашютсемпе мĕнле усă курни.

тенĕ. Çав часах вут тивсе каякан водород тултарнă „колбасасем“ тăшман авиацишĕн персе ÿкерме илĕртекен япала пулса тăнă. Бомбăпа ракетăсем çинчен каламалли те çук, пĕр вут тивертекен пуля лекниех те аэростата çунтарса ярса, ун çинчи сыннисене (сăнавçăсене) пĕтерме çителĕклĕ пулнă. Çавăнпа та çав аэростатсене персе ÿкересси çар летчикĕсен юратнă ĕçĕ пулса тăнă.

Çавнашкал вут тивсе кайнă аэростат çинчи çынсене вилĕмрен çăлăнмалли пĕр мел çех тăрса юлнă. Вăл—парашютпа сикесси пулнă. Çак вăхăталла вара парашюта тивĕçлипе хака хума тытăнаççĕ. Чи малтан çавнашкал кăкарса янă аэростатсем çинчен парашютпа сиксе анса çăлăнассине французсем майласа янă, хăйсен вĕçевçисене, вĕсем аэростатпа çĕкленнĕ чухне парашют илмелле тунă. Вĕсене кура нимĕçсем те парашют ĕçне сарма пуçланă. Тепĕр ик-виç çултан вăрçа хутшăннă çĕршывсен çарĕсенче пуринче те кăкарса яракан аэростатпа çĕкленекенсен кашниннех парашют пулнă.

Вăрçă фронтĕнче усă курма тытăннăранпа кĕске срокрах парашют чылай çынна вилĕм-

рен хӑтарнӑ. Аэростатпа ҫӗкленсе вӑрҫӑ епле пынине сӑнаса сигналсем паракан вӗҫевҫӗсем хӑйсен аэростачӗ ҫунма е ӳкме тытӑнсанах, аэростат корзининчен парашютпа сиксе, чиперех ҫӗре аннӑ (7 ӳк.).

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче парашютпа ҫапла усӑ курса сӑнаса пӗлнӗ хыҫҫӑн, вӗҫевҫӗсем парашюта хак хуманни пӗтнӗ.

Кӑкарса ярса ҫӗкленмелли аэростат ҫинче ӑнӑҫлӑн усӑ курнӑ парашют ҫар авиацине самолетсем ҫине те куҫмасӑр тӑма пултарайман. Чӑнах та, тӗнче вӑрҫи вӗҫнерехре „союзниксен" тата Германин самолечӗсенчен нумайӑшӗ ҫинче парашютсем пулнӑ.

Анчах та, парашюта пула чылай вӗҫевҫӗ вилӗмрен хӑтӑлнӑ пулин те, ҫав летчиксем хушшинче парашюта ним вырӑнне хуманнисем те чылай пулнӑ. Тӗнче вӑрҫин юлашки уйӑхӗсем тӗлнелле куллен сывлӑшри ҫапӑҫусем тата зенитнӑй артиллери вуншар самолет ҫӗмӗрсе стройран кӑларма тытӑнсан, летчиксен ирӗксӗрех парашютпа ҫӑлӑнӑҫ шырамалла пулнӑ. Ҫапах та вӑрҫӑ хыҫҫӑн парашюта авиацирен кӑларса пӑрахнӑ та темиҫе ҫул хушши ун ҫинчен каллех манса кайнӑ.

Тĕнче вăрçи вăхăтĕнчи самолет парашючĕн конструкцийĕ аэростатсем çинчи парашютсеннипе пĕр пекех пулнă. Вăрçă пĕтнĕ тĕлелле çеç урăхла парашютсем туха пуçланă. Анчах уçăласса вăл тапхăрти парашютсем пурте автоматла, пĕр вĕçĕпе самолет çумне, теприпе парашют куполĕ çумне çыхнă кантăра туртăннипе уçăлнă.

Самолет çинчен сиксен, кантăри ранеца уçса, ун ăшĕнчен парашюта туртса кăларнă, кайран летчик кĕлетки йывăрăшĕпе купол тăрринчен çыхнă кантăри татăлнă (8 ўк.).

Тĕнче вăрçи чарăннă тĕлелле Англия капитанĕ *Ирвин урăхла уçăлакан парашют* шутласа кăларнă. Вăл парашютпа сикекенĕн аннă чухне парашютне ăрасна ункаран туртса хăй уçмалла тунă. Ку парашют автоматла парашютсенчен аванрах, тыткалама та лайăхрах пулнă пулин те, вăл часах сарăлма пултарайман.

## Вăрçă хыççăнхи парашют

Тĕнче вăрçи хыççăн чи малтан Америкăра тĕрлĕ çĕршывсен авиацийĕ фронтра усă курнă парашютсене пур енчен те тĕрĕслесе сăнав-




8 ӳк. 1914 — 1918 çç. Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче самолет-семпе вĕçекенсем усă курнă автоматла парашют.

сем туса вӗренме тытӑннӑ. Тӗплӗн тӗрӗслесе пӗлнӗ хыҫҫӑн, американецсем Ирвин системипе тунӑ автоматла мар, самолет ҫумне ҫыпӑҫтарман ирӗклӗ парашюта суйласа илнӗ. Мӗншӗн ҫавӑн пек парашют ҫинче чарӑнса тӑнӑ-ха американецсем? Мӗншӗн тесен летчик ку парашюта хӑй хӑҫан уҫас тенӗ чухне, хӑҫан уҫма кирлине суйласа илсе уҫма пултарать. Автоматла парашютсем ун пек мар, вӗсем яланах самолетран пӗр виҫе аякра уҫӑлаҫҫӗ. Самолет сывлӑшра ҫӗмӗрӗлнӗ е ӑна вут хыпса илнӗ пулсан, унран пӑртак аяккараха ансан тин парашюта уҫни аванрах. Ун пек тусан, хӑрушлӑхӗ сахалрах, мӗншӗн тесен самолет ҫывӑхӗнчех уҫӑлнӑ парашюта вут хыпса илме е ӳкекен самолет ҫитсе ҫапӑнма пултарать.

Суйласа илнӗ системӑллӑ парашюта пур енчен те тӗплӗн тӗрӗслесе сӑнанӑ хыҫҫӑн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен сывлӑш корпусӗн начальникӗ приказ панӑ. Ҫӗнӗ самолетсене тӗрӗслекен технически отдел летчикӗсен пурин те хӑйсемпе пӗрле парашют илсе вӗҫмелле, тенӗ вӑл приказра. Ку ҫӗнӗ япалана летчиксем кӑмӑлласах йышӑнман.

Приказа пурнăçа кĕртесси енĕпе хытă тĕрĕслесе пынă пирки çеç вĕсем парашют тăхăнса вĕçме тытăннă.

1922 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенче пĕр çар летчикĕ парашютпа сиксе вилĕмрен хăтăлнă. Ку тĕнче вăрçи хыççăнхи пĕрремĕш тĕслĕх пулнă. Технически отдел пилочĕ *Гаррис* лейтенант тĕрĕслесе пăхма çĕкленнĕ самолет сывлăшра арканса кайнă та пилот парашютпа сиксе çăлăннă.

Гаррис лейтенант вилĕмрен хăтăлни Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенче парашют ĕçне малалла хăвăрт сарăлма питĕ пулăшнă. Технически отдел летчикĕсем парашют пахалăхне курса ĕненсе çитнĕ хыççăн, парашют çине çăмăлттайла пăхма пăрахнă, сывлăшри корпус командованийĕ çар самолечĕсем çинче вуринче те парашютсем пулмалла тунă.

1924 çултанпа вара Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенчи çар авиацинчи летчиксене пурне те парашютпа вĕçмелле тунă. Çак йĕркене йышăннă хыççăн малтанхи çулĕнчех парашютпа сиксе 11 çын çăлăннă. Малалли çулĕсенче парашюта пула вилĕмрен çăлăннă

пилотсен хисепĕ хăвăрт ӳссе пынă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хыççăн Англия çар авиацине те парашют кĕртнĕ, унтан Италипе Францире те çав йĕркене йышăннă. Хальхи вăхăтра тĕнчери пур государствăсенче те çар летчикĕсен парашют пур.

Парашютпа сиксе вилĕмрен хăтăлакансен хисепĕ ӳссе пынă май, летчиксем парашют пахалăхне тата ытларах туйса ĕненсе пынă. Темле хăрушă авари вăхăтĕнче те унпа усă курса çăлăнма май пурри палăрнă.

Пĕтĕм тĕнчери авиацишĕн парашют халĕ чăн-чăнах та „сывлăшри çăлăнăç унки" пулса тăчĕ. Çавăнпа та хальхи самолета шухăшласа кăларнă хыççăнах парашют хăй йышăнма тивĕçлĕ вырăна çирĕппĕнех йышăнчĕ.

Юлашки вăхăталла граждански авиацире те парашют тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ. Вăл транспорт самолечĕсем çинче авари-мĕн пулсан, пассажирсене çăлмалли хатĕр пулса тăчĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пассажирсем илсе çӳрекен самолет креслисем çумне „Аялалла анăр" ятлă автоматла усăлакан парашют туса питĕ ăнăçлă сăнаса пăхнă (9 ӳк.). Пассажирсене парашютпа антарма кирлĕ пул-

сан, летчик пĕр рычажока пусса кресла айĕнчи люка уçать те, кресли тайăлать, пассажирĕ самолетран тухса ÿкет. Парашючĕ хăех уçăлать.



9 ÿк. „Аялалла анăр" пассажир парашючĕ мĕнле ĕçлени. Сылтăмра çÿлте: кресла çинче çын мĕнле выртасса ларни.



**10 ӳк.** Харӑсах икӗ парашюта уҫса анни. Сылтӑмра „Ирвин" парашючӗн вӗренмелле сикмелли комплекчӗ.

## ПАРАШЮТПА УСӐ КУРНИ

### Летчиксене парашютпа сикме вӗрентни

Гаррис лейтенант парашютпа сиксе ҫӑлӑннине асра тытса, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫар авиацин командованийӗ ҫар самолечӗсем ҫинче пуринче те обязательнӑй йӗркепе парашют пулмалла тунипе пӗр вӑхӑтрах летчиксене пурне те парашютпа сикме вӗрентес ӗҫе организациленӗ. Кӗске срокрах ҫар авиацин шкулӗсенче тата строевой чаҫсенче парашют инструкторӗсем вӗрентсе хатӗрленӗ. Парашют пайӗсене, ӑна мӗнле тытса усрамалли тата усӑ курмалли ҫинчен вӗрентнисӗр пуҫне, ку курссенче вӗреннине практикӑра туса кӑтартасси те программӑна кӗнӗ. Малтанах ӑна самолетсем ҫинчен парашютпа манекенсем пӑрахса туса кӑтартнӑ. Манекенӗ ҫумӗнче самолетран кӑларнӑ кантӑра пулнӑ, манекен йывӑрӑ-

шĕпе туртăнса вăл парашюта уçса сарса янă. Унтан парашют инструкторĕсем самолет çинчен парашютпа анса кăтартма тытăннă.

Парашютпа манекенсем антарни, инструкторсем сиксе кăтартни парашют ĕçне питĕ хăвăрт сарăлма пулăшнă. Летчиксем хушшинче парашютпа хăйсем сиксе пăхас текенсем нумайлансах пынă. Летчиксен çав ĕмĕтне пурнăçа кĕртме йышăннă. 1925 çултанпа Америка авиацийĕнче, ку таранччен ăнсăртран тата хăшпĕр чухне çеç сикнисем вырăнне, парашютпа самолет çинчен сикесси анлăн сарăлса пынă. Ку вăхăталла сикме вĕрентмелли комплектсем—харăсах икĕ парашют тăхăнса сикмелле май шухăшласа кăларнă. Пысăк парашючĕ — çурăм çинче пулать, унăн куполĕ сарлака (ерипен анма пулăшакан), тепĕр парашючĕ кăкăр çинче, унпа пысăк парашют уçăлмасан е пăсăлсан усă кураççĕ. Сикнĕ чухне ку парашютсене иккĕшне харăсах уçса анма та юрать (10 ӳк.).

Парашютпа çавăн пек вĕренмелле сикесси çуллен çул нумайланса пыни ку ĕç енне çамрăксене илĕртмесĕр тăма пултарайман. Гарнерен пурăннă саманаран пуçласах пара-

шют аэростатсемпе самолетсем çинчен сиксе çăлăнмалли аппарат пулнă пулсан, халĕ те вăл, паллах, ку пĕлтерĕше çухатман тата çамрăксем юратакан питĕ анлă сарăлнă спорт вăййине кĕрсе пырать.

Америкăра парашют ĕçĕпе çавăн пек интересленни, парашютпа сикесси кулленхи ĕç пулса тăнă май, вăл Европăна та куçнă. Пуринчен ытла вăл Италипе Англире сарăлнă. Ытти çĕршывсенче те парашютпа пĕр-икĕ хут сикнисем çĕршерĕн шутланаççĕ.

## Инструкторсем сăнавла сикни

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче, Италире тата Англире, унтан ытти çĕршывсенче те, парашют çинчен хăнăхмалла, вĕренмелле сикес ĕç масса хушшинче сарăлса пынă май, парашютпа тĕрлĕ условире мĕнле усă курассине сăнаса пĕлес ĕç те пуçланса кайнă.

Штопора лекнĕ самолет çинчен сикни, çӳлтен, аялтан сикни, самолет çуначĕ çинчен (вĕçерĕнсе анса) сикни, шыв çине, юр çине, вăрмана анни, парашюта час уçмасăр анни т. ыт. те. Çак сăнавсем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Парашют ĕçне

юратакан энтузиаст-инструкторсем вăл сăнавсене темиçе хутчен хăйсем туса пăхса тĕрĕсленĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче парашютист-инструкторсем хушшинче икшер те виçшер çĕр хутчен тĕрлĕ условисенче парашютпа сикнисем сахал мар. Пĕр 50 çулхи Николс сержанта асăнма тивĕç. Вăл паян кунччченех парашютпа çав тери интересленсе сикет, летчиксен шкулĕнче инструктор пулса ĕçлет.

Парашютист *Форд*—1925 çулта Совет Союзне „Рекламный прыжоксем" тума килнĕскер; *Уайт*—1930 çулхи май уйăхĕнче кислородлă прибор тăхăнса 8 пин метр çӳллĕшĕнчен сиксе тĕнчипе чи малти вырăна тухнăскер; *Меннинг*—1932 çулхи ноябрь уйăхĕнче аэроплан çинчен сикнĕ хыççăн парашютне уçмасăр 3200 метр хушши аннăскер; *Дункель*—17 çул хушши вĕçĕмсĕрех çуллен парашютпа сикекен, сывлăш шарĕ, кăкарса янă аэростат, дирижабль тата самолетсем çинчен тĕнчери пур йышши парашютсемпе те сиксе пăхнă çын—акă Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи чи паллă чаплă парашютистсем. Ун пек паллă, хастар, тем тĕрлĕ сăнавсем туса пăхнă па-

рашютистсем халĕ ытти çĕршывсенче те сахал мар. Нумаях та пулмасть аэронавтика архивĕнчен кăларнă примитивлă парашют çав çынсен вăй-халĕпе хастарлăхне пула ĕнтĕ лайăх, этеме пăхăнакан, темиçе çĕр çынна вилĕмрен хăтарнă аппарат пулса тăчĕ. Вăл çĕнĕ, интереслă спорт хатĕрĕ пулса сарăлчĕ.

## Парашютпа вăрçăра усă курасси

Самолет çинчен пĕр вăхăтрах темиçе çын парашютпа сикме пултарни, ушкăнăн сиксе сăнавсем туса кăтартни капитализмлă çĕршывсен çарĕсенчи командованисене парашютпа тата урăх тĕлĕшпе те усă курас шухăш енне илсе пынă. Вăл тăшман çĕрĕ çине, фронт хыçне çар чаçĕсене пур тĕрлĕ хĕçпăшалпах парашютпа антарса хăварасси—„сывлăшран анакан десант" пулать. Халĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче, Италире тата ытти çĕршывсенче те, маневрсемпе „вăрçă вăййисенче" пуринче те çавнашкал парашютпа десант антараççĕ. Малтан салтаксене антараççĕ, унтан груз антармалли ятарласа тунă парашютсемпе хĕçпăшал, апат-çимĕç тата ыттисене те антараççĕ (11 ӳк.).

Халĕ питĕ пысăк гигант-самолетсем тăваççĕ. Вĕсем хĕçпăшаллă çĕршер боец ытла сывлăша çĕклесе хăпартма пултараççĕ. Тата çĕр çине мотоциклетсем, автомобильсем, танкеткăсем антармалли парашютсем тăваççĕ. Çак енĕпе питĕ ăнăçлă сăнавсем иртерни — хальхи вăхăтра çарти пысăк специалистсене парашют ĕçĕпе çав тери хытă интереслентереççĕ.

Çапла ĕнтĕ, вĕçевçĕсен пурнăçне çăлма, вĕсене ÿксе вилесрен хăтарас тесе шухăшласа кăларнă парашют пирĕн саманара урăх майлă усă курмалли аппарат пулса тăчĕ.



11 ӳк. Италире маневр вăхăтĕнче парашют десантне антарни.

# ПАРАШЮТ ССР СОЮЗӖНЧЕ

## Парашют тӗнче вӑрҫипе интервенци вӑхӑтӗнче

Тӗнче вӑрҫи нумай государствӑсенче парашюта аталантарма тата лайӑхлатма пулӑшнӑ. Анчах та, вырӑс авиацинче парашют пулманпа пӗрех. Вӑрҫӑ пӗтнӗ тӗлелле те пирӗн ҫӗршывра кӑкарса вӗҫмелли аэростатсем ҫинче ҫеҫ парашютпа усӑ курнӑ. Ытти ҫӗршывсенче тухнӑ самолет парашючӗсем вырӑс авиацине ҫитсе кӗме ӗлкӗреймен.

Граждан вӑрҫипе интервенцин йывӑр ҫулӗсенче пирӗн ирӗксӗрех патша Российӗнчен мӗн юлнипе килӗшмелле пулнӑ. Кивелсе пӗтнӗ кӑкарса вӗҫмелли аэростатсемпе пӗрле ун чух пире Франципе Англирен илсе килнӗ „Жюкмес“ тата „Кальтроп“ парашютсем тата вырӑс конструкторӗ Г. Котельников парашючӗсем ҫирӗме яхӑн юлнӑ.

Граждан вăрçи вăхăтĕнче фронтсенче çак парашютсемпе ăнăçлăн усă курнă, вĕсем Хĕрлĕ çарăн вĕçевçисене пĕр хутчен çеç вилĕмрен çăлса хăварман.

Совет вĕçевçисем хушшинче парашюта ĕненесси питĕ пысăк пулнă, çавăнпа та пирĕн кăкарса вĕçмелли аэростатсемпе çĕкленекенсем хушшинче белогвардеецсемпе, интервентсемпе çапăçнă çулсенчех, хăйсен ирĕкĕпе парашютпа сикекенсем чылай пулнă.

1921 çулта Ленинградри воздухоплавани шкулĕнче çамрăк вĕçевçĕсем хатĕрлес программăна кăкарса вĕçмелли аэростатсем çинчен парашютпа сикме вĕрентессине кĕртнĕ.

Çак çĕнĕ ĕç пирĕн çĕршывра парашют ĕçне малалла аталантарма та пулăшĕччĕ-и тен, анчах малтанхи утăмрах пĕр инкек пулнă. Черетлĕ заняти вăхăтĕнче шкулта вĕренекен *Молчанов* ӳксе вилнĕ. Вăл вилнин сăлтавĕ— 800 метр çӳллĕшĕнчен сикнĕ чух парашюта уçнă вăхăтра стропсем (парашют сунчăкне тытса тăракан кантăрасем) татăлса кайни пулнă.

Стропсем татăлни парашютăн çирĕплĕхĕ чакнинчен килнине пĕлсен, Хĕрлĕ сывлăш флот командованин тренировка тăвас

майĕпе сикессине ирĕксĕрех вăхăтлăха чармалла пулнă. Вăл парашютăн усă курмалли тата сыхласа усрамалли срокĕ, ун чухне пулнă пур ытти парашютсенни пекех, тахçанах иртсе кайнă пулнă.

Çакăн хыççăн, вĕçев чаçĕсенче ютçĕршывсенчи образецсем тăрăх тунă парашютсем хутшăннă пулсан та, чылай çулсем хушши кăкарса вĕçмелли аэростатсем çинчен сикесси сайра-хутра тата пĕчченшерĕн çеç пулса пынă.

## Парашют совет авиацийĕнче

Граждан вăрçи вăхăтĕнче Совет республикин хăшпĕр пайне урăх государствăсем йышăнни пире ютçĕршывсенчи авиацире усă куракан парашютсемпе паллашма май пачĕ.

1926 çулта сывлăш флочĕн наукăпа сăнав институчĕ урăх çĕршывсенчен илсе килнĕ самолет парашючĕсен тĕрлĕ образецĕсене танлаштарса сăнаса пăхма пуçларĕ. Вара Ирвин системиллĕ ирĕклĕ (автоматла мар) парашюта суйласа йышăнчĕç.

Пуринчен малтан, Америкăри пекех, çĕнĕ

самолетсене сăнаса пăхакан летчиксене парашютсем пачĕç. Ютçĕршывсенчи авиацире, самолетсем çинче парашютпа усă курас опыт чылай пулнă пулсан та, çак çĕнĕ ĕç çине тăшманла пăхнă пулсан, пирĕн 1925 çулта çеç парашют курнă—летнăй состав ун çине çителĕклех юратса пăхманнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

1927 çулхи июль уйăхĕнче *парашютпа совет летчикĕ вилĕмрен хăтăлни малтанхи хут пулчĕ.* Наукăпа тĕпчев институт летчикĕ—Громов—штопор тума пуçласан темле тăрăшсан та самолетне штопортан кăларма май килмен. Вара унăн ирĕксĕрех самолет çинчен сикмелле пулнă. Вăл 1 200 метр çӳллĕшĕнчен сикнĕ. Летчик ăнăçлăн çĕре аннă.

Громов юлташ хăтăлнă хыççăн, парашют Наукăпа тĕпчев институчĕн тата икĕ летчикне вилĕмрен çăлса хăварчĕ.

Пĕрремĕш летчик штопор тума чарăнсан, самолет çинчен 100 метр çӳллĕшĕнче çеç сиксе тухнă. Иккĕмĕш летчикĕн самолечĕ сăнавлă вĕçев тунă чух, кĕтмен çĕртенех, çĕмĕрĕлсе кайнă та, летчикĕн вара парашютпа анма тивнĕ.

Çакăн хыççăн, паллах, институтри летнăй состав парашют çине пăхни татăклăнах улшăннă, вара „тинĕс леш енчен илсе килнĕ япала“ летчикăн уйăрăлми юлташĕ пулса тăнă.

Анчах та, парашютăн усăллă ĕçĕсемпе практикăра курса паллашман авиаци чаçĕсенче парашют çине тивĕçлĕ хакласа пăхманни чылайччен пынă. Чăннипе, парашют ĕçĕн инструкторĕсем çителĕклĕ пулманни тата парашютизма пропагандăлас тĕлĕшпе нимĕн те тенĕ пек ĕçлеменни те парашюта тивĕçлипе хаклассине кансĕрлесе тăнă.

## Тренировка тăвас тĕлĕшпе сикнисем тата парашютизма пропагандăлани

1929 çул вĕçĕнче, çак кĕнеке авторĕ Америкăра парашют ĕçне мĕнле йĕркелесе пынине вĕренсе тата самолет çинчен темиçе хут сикнĕ хыççăн таврăнсан, парашютизм пропагандине сарма, парашют занятийĕсене, тренировкăллă сикессине организацилеме йышăннă.

1930 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче, авиаци

бригадин летнӑй составне тренировка тӑвас тӗлӗшпе парашютпа сикме хатӗрлесе ҫитерсен, автор тата унӑн ҫывӑх помощникӗ—ҫав летнӑй бригадӑн летчикӗ *Мошковский* — „Фарман-Галиаф" самолет ҫинчен малтанхи хут парашютпа кӑтартуллӑ сиксе кӑтартнӑ.

Ҫак кунран пирӗн ҫӗршывра парашютпа массӑллӑн тренировка тӑвас тӗлӗшпе сикес ӗҫ пуҫланнӑ. 1930 ҫул пӗтнӗ тӗле пирӗн авиацин летнӑй тата техника составӗ ҫӗр хутчен ытла парашютпа сикнӗ. Ӗҫе малалла кайма парашютсем тата квалификациллӗ инструкторсем ҫителӗклӗ пулманни чарса тӑнӑ.

Ҫак ҫулах Мошковский летчик парашюта вӑрахчен уҫмасӑр тытса сӑнавлӑ тата хӗллехи условисенче сиксе пӑхнӑ. Ҫаксем ӗнтӗ парашюта тарӑнӑн тата пӗтӗмӗшле сӑнаса вӗренес тӗлӗшпе малтанхи утӑмсем пулнӑ.

1930 ҫулта парашют занятийӗсен опычӗ практикӑллӑ занятисем иртермелли правилӑсем тума, вӗсене лайӑх тӗрӗслеме тата тренировка енӗпе чылай ытти ыйтусене тӗрӗслесе тӳрлетме: чи лайӑх самолет типне,

çанталăк условине, чи усăллă çÿллĕшне т. ыт. те суйласа илме май пачĕ.

Туса иртернĕ занятисен результачĕсем çинчен статьясем çырни, калаçусем иртерни, çак кĕнеке авторĕ ертсе пынă тăрăх, 1930 çулта ÿкерсе илнĕ агитациллĕ „Парашют“ кино-картина, вĕçев составĕ хушшинче çеç мар, пирĕн çĕршыври ĕççыннисен анлă масси хушшинче те парашютизма пропагандăламалли лайăх мел пулса тăчĕ.

1931 çулта пирĕн авиаци работникĕсем парашютпа сăнав тата тренировка тăвас тĕлĕшпе 600 хута яхăн сикрĕç.

1931 çулта майăн 6-мĕшĕнче автор Хура тинĕс хĕрринче чи малтанхи хут шыв çине парашютпа сикнĕ. Çакă „типçĕр“ парашючĕ тинĕс авиацинче те усă курма юрăхлă пулнине кăтартса пачĕ, вăл шыв çине парашютпа анма хатĕрленме уйрăм вăй е ăраснах пултарулăх кирлĕ маррине кăтартса пачĕ.

1931 çулхи августăн 19-мĕшĕнче ССР Союзĕнче малтанхи хут хĕрарăмсем—*Федорова* тата *Чиркова* хăйсен ирĕкĕпе автоматла мар парашютпа сикнĕ. Вĕсем пассажир самолечĕн алăкĕсенчен сиксе юлса, парашючĕ-

сене йёркеллĕ уçса, аэродрома аван анса ларнă[1].

1931 çулхи июльпе август уйăхĕсем хушшинче Çар-медицина академи врачĕсен бригади парашютпа сикнĕ хыççăн этем организмĕнче мĕнле улшăнусем пулнине малтанхи хут сăнаса пăхнă. Сикме хатĕрленнĕ чух, самолет çинчен сиксе аннă чух тата çĕре ансанах пурĕ 360 уйрăм сăнав туса иртернĕ хыççăн, парашютпа сикес текен кашни çыннăн организмĕ мĕнле пулмаллине пĕлме питĕ паха материалсем пухнă.

1932 çулта пирĕн çĕршывра парашют ĕçĕ аталанасси уйрăмăнах ăнăçлă пулса пычĕ. Инструкторсен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлени, пирĕн промышленность парашютсем массăллă туса кăларма пуçлани, иртнĕ çулхи медицина сăнавĕсене малалла тата тарăнрах туса пыни, экспериментлă тата сăнавлă ĕçсене

---

[1] ССР Союзĕнче парашютпа сикнĕ чи малтанхи хĕрарăмсем *Граховская* тата *Кулешова.* Вĕсем Федоровăпа Чирковăран темиçе кун маларах сикнĕ. Анчах сикессе вĕсем автоматла парашютпа сикнĕ тата самолет çинчен Гроховский шухăшласа кăларнă уйрăм автоматпа усă курса ӳксе юлнă.

серипе туса иртерни, совет парашютизмĕн малтанхи рекорчĕсене туни — акă 1932 çулта тунă çитĕнӳсен кĕске итогĕ. Пĕр çул хушшинче кăна тренировка тата сăнавсем тăвас тĕлĕшпе парашютпа икĕ пин хута яхăн сикнĕ.

## Спорт парашютизмĕн аталанăвĕ

Медицина сăнавĕсем парашют спорчĕ сывлăхлă этем организмĕшĕн *пĕрре те сиенлĕ мар пулнине* кăтартса пачĕç. Çакă вара пирĕн çĕршывра парашют спортне питĕ анлăн сарса ячĕ.

Спорт парашютизмĕн пуçламăшне 1931 çулта хĕрарăмсем Кулешова, Гроховская, Федорова, Чиркова тата авиацин летнăй составĕнче тăман чылай ытти çынсем пуçарса ячĕç. Çапах та парашют спортне аталантармалли çирĕп базăна 1933 çулта СССР Осоавиахимăн Центральный Совет президиумĕ парашют ĕçне обществăн авиаци ĕçĕнчи комплексне кĕртме йышăнсан çеç хывнă.

Çак решение Осоавиахимăн парашют уявĕнче Тушинăра (Мускав çывăхĕнче) тата Мускавра Хĕрлĕ çарăн хĕллехи Пĕтĕм Со-

юзри спартакиадинче пĕчченшер тата ушкăнăн парашютпа сикнипе çирĕплетнĕ. Çак уява Осоавиахим хатĕрленĕ малтанхи парашютист-спортсменсем хутшăннă.

1933 çулта Мускавра Осоавиахимăн парашютистсен аслă шкулĕ уçăлнă.

Çак шкул, пирĕн çĕршыври массăллă спорт парашютизмĕн аталанăвне ертсе пырас ĕçе хăй çине илсе, инструктор-парашютист кадрĕсене хатĕрлес ĕçе тата парашют спорчĕн пропагандине план тăрăх туса пыма тытăнчĕ.

1933 çул хушшинче Осоавиахимăн парашютистсем хатĕрлекен аслă шкулĕ парашют спорчĕ валли вуншар инструктор хатĕрлерĕ, Мускаври шултра предприятисенче парашют кружокĕсем организацилерĕ, парашютист-кружковецсене çĕршер çын самолет çинчен сиктерчĕ.

1933 çулхи августăн 18-мĕшĕнче, Пĕтĕм Союзри Авиаци кунĕ, парад вăхăтĕнче Осоавиахимăн парашютистсем хатĕрлекен аслă шкулĕ самолетсем çинчен 62 парашютиста пĕр харăс сиктерсе пысăк усăллă ĕç турĕ.

Парашютист-осоавиахимовецсем парашютпа пĕр харăс сикни парашютистсем хатĕрле-

кен аслă шкулăн çитĕнĕвĕсене кăтартакан паха демонстраци пулса тăчĕ.

Осоавиахимăн парашютистсем хатĕрлекен аслă шкулĕн ĕçĕ Мускав территоринче çеç чарăнса тăман. Осоавиахимăн облаç, край тата республика совечĕсем валли шкулта хатĕрленĕ инструкторсем, вырăнсене кайсан, Совет Союзĕн промышленноçлă центрĕсенче парашют вышкисем (12 ўк.) тума, парашют кружокĕсем организацилеме тытăннă.

Çапла ĕнтĕ, совет парашют спорчĕ майĕпе пирĕн çĕршыври ĕççынни çамрăкĕсен массин ĕçĕ пулса тăрать.

1933 çул пĕтнĕ тĕле пирĕн парашютист-спортсменсем самолет çинчен парашютпа пин хут ытла сикнĕ. Совет Союзĕнче парашютпа сикнисен хисепĕ 1935 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 35 пинрен те иртнĕ!

## Совет парашютизмĕн инструкторĕсем

Çамрăк совет парашютизмĕн кĕске срокра тунă пысăк çитĕнĕвĕсем пуринчен ытла пирĕн çĕршывра тачă пĕтĕçнĕ инструктор-парашютистсен коллективĕ пулнинчен килнĕ. Парашют спортне пуçарса яракансен пĕчĕк



12 ӯк. Парашют вышки.

ушкӑнӗ, хӑйсен примерӗпе, авиацин летнӑй составӗ хушшинче, унтан пролетари ҫамрӑкӗсен анлӑ масси хушшинче парашют шанчӑклӑхӗ ҫинчен иккеленӳсӗр ӗнену сарма пултарнӑ. Ҫак коллектив ҫумне, 1930 ҫулта совет парашютизмӗн пионерӗсем пулса тӑракан автор, унӑн помощникӗ—летчик *Мошковский* тата парашютсем пуҫтарас ӗҫӗн инструкторӗ *Баранов* пӗрлешсе тӑнӑ коллектив ҫумне ҫамрӑк парашютистсем хутшӑннӑ. Тӑрӑшса тренировкӑсем иртернипе 1931 ҫул вӗҫӗнче вӗсем хӑйсем тӗллӗнех инструктор ӗҫӗн пысӑк опычӗсене пухнӑ.

1932 ҫулта, Евпаторире парашют сборӗ туса иртернӗ хыҫҫӑн, совет парашютизмне пуҫласа яракансен виҫҫӗмӗш ушкӑнӗ пулса тӑракан ҫӗнӗ инструкторсем хутшӑнчӗҫ.

1930—1932 ҫулсем хушшинче пирӗн инструкторсем практикӑлла нумай экспериментсемпе сӑнавсем тунӑ.

Пысӑк мар ҫӳллӗшрен сикессине, ҫӗрлехи вӑхӑтра сикессине, парашюта вӑрахчен уҫмасӑр сикессине, ҫав тери ҫӳлтен сикессине, шыв ҫине тата юр ҫине сиксе анассине вӗсем кӗске срокрах алла ҫавӑрса илнӗ.

1933 — 1934 çулсенче инструктор кадрĕсен çумне çак çĕнĕ тата интереслă профессишĕн ĕçлеме хатĕр çĕршер çын хутшăннă. Малтанхи çулсенче инструкторсен кадрĕ пуринчен ытла çар авиацин летнăй составĕ шутĕнчен ӳснĕ пулсан, 1933 çулта Осоавиахимăн парашютистсем хатĕрлекен аслă шкулне уçсан, унтан спорт парашютизмĕн çĕнĕ инструкторĕсем вĕренсе тухрĕç. Çак инструкторсем, халиччен нихăçан самолет çинче вĕçмен пролетари çамрăкĕсенчен хатĕрленĕскерсем, хăйсен тĕп профессинчен уйрăлмасăрах ĕçлерĕç.

Инструкторсен хисепĕ малалла ӳссе пыни парашюта пролетари çамрăкĕсен массăллă спорчĕ тума май парать. Парашют инструкторĕсен - общественниксен малтанхи кадрĕсене хатĕрлес ĕçе пĕтĕмĕшпех Осоавиахимăн парашютистсем хатĕрлекен аслă шкулĕн начальникĕ *летчик Мошковский* тата унăн икĕ çамрăк помощникĕ—шкул инструкторĕсем *Остряков* тата *Балашов* туса пынă. 1933 çулăн пуçламăшĕнче Мошковский ертсе пынă тăрăх инструктор пулма хатĕрленсе çитсен, Осоавиахим вĕçев шкулĕн во-

питанникĕсем Остряковпа Балашов хăйсем питĕ талантлă тата паттăр парашютистсем пулнине кăтартрĕç. 1934 çул вĕçĕнче вĕсем çĕре яхăн сикнĕ, çĕршер инструктор-парашютистсем вĕрентсе хатĕрленĕ, 1500 ытла парашютист-кружковецсем вĕрентсе кăларнă тата тĕрлĕ сăнавсем тăвас тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ.

## Пирĕн парашют конструкторĕсем

Пирĕн çĕршывра парашютсен чи малтанхи конструкторĕ Г. Котельников пулнă. Парашют тĕлĕшпе вăл çирĕм çул ытла ĕлĕкрех ĕçлеме пуçланă. 1912 çулта, парашютизмпа ютçĕршывсенчи уйрăм изобретательсем çеç интересленнĕ вăхăтрах, вăл хăйĕн малтанхи автоматла парашютне тунă.

1914—1918 çулсенчи тĕнче вăрçи вăхăтĕнче Котельников парашючĕсемпе çителĕклĕ усă курманнин сăлтавĕ—ютçĕршыв маркине йăтса çӳренипе суккăрла хавасланма юратакан патша чиновникĕсен консерватизмĕ пулнă. Котельников парашючĕ çав тери паха пулнă пулин те, патша правительствине авиаци пурлăхĕсем тăратакан ютçĕршыв па-

рашючĕпе тавлашма пултарайман. Çапах та, Францин „Жюкмессемпе“ тата Англин „Кальтропĕсемпе“ пĕрлех, вырăс çарĕнчи кăкарса вĕçмелли хăшпĕр аэростатсем Котельников парашючĕсемпе усă курнă.

Империализм вăрçи вăхăтĕнче, унтан граждан вăрçин фрончĕсенче Котельников парашючĕ кăкарса вĕçмелли аэростат сăнавçисене чылайăшне вилĕмрен çăлса хăварнă.

Граждан вăрçи хыççăн Котельников автоматпа ĕçлекен самолет парашючĕ тунă. Анчах çак вăхăтра ютçĕршывсенче летчик хăйĕн ирĕкĕпе вытяжнойункăна туртса кăларнипе ĕçлеттермелли ирĕклĕ парашютсем тухнă. Автоматпа танлаштарсан, вĕсем чылай аван пулнă. Çакна пула пирĕн авиацире Котельниковăн çĕнĕ парашючĕпе усă курман. Пирĕн авиаци Америкăри Ирвин системиллĕ автоматла мар парашюта суйласа илнĕ.

Котельников конструктор пассажирсене самолетăн кабинипе пĕрле çĕре илсе антармалли парашюта шухăшласа кăларнă. Анчах халĕ кун пек парашюта пурнăçа кĕртмен-ха.

1931 çулта парашют ĕçĕнче талантлă изобретатель летчик П. Гроховский ĕçлеме

тытăннă. Кĕске срокрах вăл самолет ҫинчен почта, ҫынсем тата ытти япаласем антармалли тĕрлĕрен парашютсем тунă тата парашютпа сикме вĕренекенсем валли вышка тунă. Унăн грузсем тата почта антармалли парашючĕсемпе, ҫавнашкалах тĕрлĕрен парашют хатĕрĕсемпе, пирĕн ҫĕршыври хальхи техникăн пур ҫитĕнĕвĕсенче те анлăн усă курма пуҫланă.

## Спорт парашютизмĕн рекорчĕсем

1932 ҫулта Евпаторири парашютистсен сборĕ вăхăтĕнче ССР Союзĕнчи инструктор-парашютистсен малтанхи ăмăртăвĕ пулса иртнĕ. Ҫав ăмăртун лайăх результачĕсем, инструкторсен составĕн уйрăм тренировкисене спорт характерĕ парас задачăпа тунăскер, пирĕн парашютистсем ютҫĕршывсенчи чи лайăх парашютистсемпе те ăнăҫлăн танлашма пултарнине кăтартрĕ.

Чăнах та, 1932 ҫул совет парашютизмне малтанхи рекордсем пачĕ.

Майăн 22-мĕшĕнче парашютист Н. Евдокимов парашюта нумайччен уҫмасăр сиксе, пĕтĕм Союзри пĕрремĕш рекорд турĕ.

Вăл 1 200 метр çӳллĕшĕнче самолет çинчен сиксе, 14 секунда хушши парашютне уçмасăр 500 метр хушши аннă. Парашютне çĕртен 700 метр çӳллĕшĕнче уçнă.

Парашюта нумайччен уçмасăр сикнин пĕтĕм тĕнчери рекорчĕ вăл вăхăтра американецсен аллинче пулнă. Унта парашюта уçмасăр 1 500 метр аннă.

Августăн 17-мĕшĕнче парашютист *Петров* 5 200 метр çӳллĕшĕнчен кислород приборĕсĕр сиксе ***пĕтĕм Союзри рекорда тунă***. Çӳлтен сикес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери рекорда 1930 çулта американец *Шумеккер* тунă. Вăл 6 пин метр çӳллĕшĕнчен кислород приборĕсĕр сиксе аннă.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче парашютист *Забелин* парашютпа 6 200 метр çӳллĕшĕнчен анса, Петровпа Шумеккер çитĕнĕвĕсене кая хăварнă.

Çапла вара Забелин кислород приборĕсĕр çӳлтен сикес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ рекорда тунă. Çапах та кислород приборĕпе çӳлтен сикес тĕлĕшпе, пĕтĕм тĕнчери рекорд ĕлĕкхи пекех, Америкăри парашютист *Уайтра* юлнă. Вăл 1931 çулхи май уйăхĕнче 8 пин метр çӳллĕшĕнчен сиксе аннă.

Сентябрӗн 29-мӗшӗнче *ҫамрӑк парашютист Афанасьев* парашюта нумайччен уҫмасӑр анас тӗлӗшпе совет парашютисчӗ Евдокимов тунӑ ҫитӗнӳрен икӗ хут иртернӗ. Вӑл 33,5 секунда парашюта уҫмасӑр 1 600 метр аннӑ. Парашютист Афанасьев самолет ҫинчен 2 пин метр ҫӳллӗшӗнче сикнӗ те парашютне ҫӗртен 400 метр ҫӳллӗшӗнче уҫнӑ.

Шӑп тепӗр уйӑхран парашюта нумайччен уҫмасӑр анас тӗлӗшпе тӗнчери рекорд ҫӗнӗрен американецсен аллине куҫнӑ.

1933 ҫулта совет парашютисчӗсем пӗтӗм Союзӗпе тата пӗтӗм тӗнчипе ҫӗнӗ рекордсем турӗҫ, парашют ӗҫне алла ҫавӑрса илес ӗҫри пысӑк ҫитӗнӳсене тата тепӗр хут пӗтӗм тӗнче умӗнче кӑтартрӗҫ.

Февралӗн 15-мӗшӗнче парашютист *Зворыгин парашюта нумайччен уҫмасӑр сикес тӗлӗшпе пӗтӗм Союзри ҫӗнӗ рекорд тунӑ* (41 секунда хушшинче 2 200 метр аннӑ).

Июлӗн 15-мӗшӗнче *парашюта нумайччен уҫмасӑр сикес тӗлӗшпе пӗтӗм Союзри рекорд Зворыгинран Кайтанов парашютиста куҫнӑ.* Вӑл парашюта 62 секунда уҫмасӑр 3 170 метр аннӑ, пӗтӗм тӗнчери рекорда

(3 200 метр) пăртак çеç çитеймен. Çакăн хыççăн нумаях та вăхăт иртмен, ютçĕршыв хаçачĕсем парашюта нумайччен уçмасăр сикес тĕлĕшпе *Англия парашютисчĕ Транум* пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ рекорд туни çинчен пĕлтернĕ. 7 пин метр çӳллĕшĕнче самолет çинчен сиксе, вăл парашюта уçмасăр 5 300 метр анса, американец Меннинга нумай кая хăварнă. Анчах парашюта нумайччен уçмасăр сикес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери рекорд часах çĕнĕрен çамрăк совет парашютизмне куçнă.

Августăн 21-мĕшĕнче парашютист Н. Евдокимов—парашюта нумайччен уçмасăр сикессипе Совет Союзĕн пĕрремĕш рекордсменĕ — самолет çинчен 6 700 метр çӳллĕшĕнче сиксе, 108 секунда хушши парашюта уçмасăр аннă. Çак хушăра вăл 6 200 метр анса, Транум англичанинăн пĕтĕм тĕнчери рекордĕнчен 900 метр ирттернĕ. Çак пĕтĕм тĕнчери рекорда вăл икĕ уйăха яхăн тытса тăнă. Анчах кун хыççăн пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ рекорд ютçĕршыв парашютисчĕсене куçман.

Октябрĕн 10-мĕшĕнче совет парашютисĕ Евсеев 7 200 метр çӳллĕшне хăпарса, 132,5 секунда, урăхла каласан, икĕ минута ытла пара-

шютне уçмасăр аннă. Çак 132,5 секунд хушшинче парашютист Евсеев парашюта уçмасăр 7 050 метр анса, парашютне вăл çĕртен 150 метр çӳллĕшĕнче çеç уçнă.

Çапла ĕнтĕ, 1933 çул вĕçленнĕ тĕле *парашюта нумайччен уçмасăр тата кислород приборĕсĕр çӳлтен сикес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери рекордсем совет парашютисĕсенче* — Евсеевпа Забелинра юлчĕç. Кислород приборĕпе усă курса сикес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери пĕр рекорда çеç американец Уайт хăй аллинче тытса юлчĕ.

1934 çул совет парашютизмне çĕнĕ паха çĕнтерӳсем пачĕ. Июлĕн 16-мĕшĕнче парашютист Н. Евдокимов парашюта нумайччен, уçмасăр сикессипе *пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ рекорд тунă.*

Самолет çинчен 8 100 метр çӳллĕшĕнче сиксе, 142 секунда хушши парашютне уçмасăр 7 900 метр аннă. Парашютне çĕртен 200 метр çӳллĕшĕнче уçнă. Сикессе кислород приборĕпе сикнĕ.

Паттăрлăх тата тӳсĕмлĕх тĕлĕшĕнчи çак тĕлĕнмелли рекорда тунă хыççăн, совет *парашютисткисем* парашюта нумайччен уçма-

сăр сикес тĕлĕшпе хĕрарăмсемшĕн пĕтĕм тĕнчери икĕ рекорд тунă.

1934 çулхи августăн 11-мĕшĕнче парашютистка-спортсменка *Булиева* парашютне уçмасăр 2500 метр анса, *парашюта нумайччен уçмасăр сикес тĕлĕшпе хĕрарăмсемшĕн пĕтĕм тĕнчери рекорд тунă.*

Çакăн хыççăн икĕ кун та иртмен, вăл рекорда Мускаври физкультура институчĕн студентки Нина Каменева çĕнтернĕ. 1934 çулхи августăн 13-мĕшĕнче *Нина Каменева* 3000 метр çӳллĕшĕнче самолет çинчен сиксе, 58 секунда хушшинче 2700 метр парашюта уçмасăр аннă. Парашютне 300 метр çӳллĕшĕнче уçнă.

1935 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче парашютист *Кайтанов*, парашютпа 6800 метр çӳллĕшĕнчен кислород приборĕсĕр сиксе, *пĕтĕм тĕнчипе çĕнĕ рекорд тунă.*

Мартăн 31-мĕшĕнче Ленинградри физкультура институчĕн студентки *Вера Федорова*— Совет Союзĕнчи пĕрремĕш парашютистка— парашютпа 6350 метр çӳллĕшĕнчен кислород приборĕсĕр сиксе, пĕтĕм тĕнчери рекорда тунă.

Апрелӗн 6-мӗшӗнче парашютист Забелин ҫӗрле парашюта нумайччен уҫмасӑр 66,5 секунда хушшинче 3 600 метр анса, *пӗтӗм тӗнчипе ҫӗнӗ рекорд тунӑ.*

Июнӗн 8-мӗшӗнче парашютист *Козуля* кислород приборӗсӗр сикес тӗлӗшпе виҫӗ уйӑх каярах парашютист Кайтанов тунӑ *пӗтӗм тӗнчери рекорда ҫӗнтерне.* Вӑл кислород приборӗсӗр 7 445 метр ҫӳллӗшӗнчен сикнӗ.

Июнӗн 17-мӗшӗнче парашютисткӑсем *Яковлева, Бабушкина, Блохина, Николаева, Барцова, Малиновская* кислород приборӗсӗр 7 035 метр ҫӳллӗшӗнчен ушкӑнпа сикнӗ. Ҫакӑ пирӗн ҫӗршывӑн хӑрама пӗлмен хӗрӗсем, парашютистка Федорова ҫитӗнӗвӗнчен иртерсе, кислород приборӗсӗр сикес тӗлӗшпе *хӗрарӑмсемшӗн пӗтӗм тӗнчери ҫӗнӗ рекорд тунӑ.*

Июнӗн 21-мӗшӗнче парашютист *Бабецкий* ҫӗрле кислород приборӗсӗр 7 400 метр ҫӳллӗшӗнчен сикнӗ.

Июнӗн 23-мӗшӗнче парашютист *Аминтаев кислород приборӗсӗр сикес тӗлӗшпе пӗтӗм тӗнчери ҫӗнӗ рекорд тунӑ,* вӑл 7 612 метр ҫӳллӗшӗнчен анса, Кайтанов тата Козуля парашютистсен рекорчӗсене ҫӗнтернӗ.

1935 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче Ленинградри физкультура институчĕн студентки *Тамара Куталова* 7 750 метр çӳллĕшĕнчен кислород приборĕсĕр сиксе, *пĕтĕм тĕнчери пур рекордсене те, хĕрарăмсенне те, арçынсенне те çĕнтернĕ!*

Юлашкинчен, 1935 çулхи августăн 2-мĕшĕнче Мускаври государство физкультура институчĕн студенткисем *Галина Пясецкая* тата *Анна Шишмарева* кислород приборĕсĕр 7 923 метр çӳллĕшĕнчен сиксе, пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ рекорд тунă.

Çӳлте кăтартнă рекордсенчен пуçне, совет парашютизмĕн тата чи сахал çӳллĕшĕнчен сикес рекорчĕсем пур. 1933 çулхи августăн 12-мĕшĕнче, „Динамо" спорт обществи вунă çул тултарнă кун, парашютист *Балашов* 80 метр çӳллĕшĕнчен стадиона сиксе аннă. Пиншер куракансем тăвăллăн алă çупса тăнă вăхăтра, Балашов самолет çинчен халиччен пулман пĕчĕк çӳллĕшрен сиксе тухса, парашютне питĕ хăвăрт уçса стадионваррине ăнăçлăн анса ларнă. 1934 çулта Балашов „Турция—СССР" футбол матчĕ пынă вăхăтра

иккĕмĕш хут „Динамо“ стадионĕ çине 100 метра яхăн çӳллĕшĕнчен сикнĕ.

## Парашют спорчĕ аталанăвĕнчи комсомол ĕçĕ

ССР Союзĕнче Осоавиахим хатĕрленĕ спортсмен-парашютистсемпе иртернĕ малтанхи массăллă парашют уявĕсем комсомола хăй еннелле пăхтармасăр иртеймен.

Чăнах та, паттăрлăх, иккеленӳсĕрлĕх тата пултарулăх кăтартма ыйтакан парашют спорчĕ *çамрăксен спорчĕ* пулса тăрать. *Парашют спорчĕ физкультурăра та, оборонăра та пысăк вырăн йышăнса тăнине кура, çак спорта аталантарас ĕçе ертсе пырассине комсомолăн хăй çине илмелле пулнă.*

Пур работниксенчен те хăйсем ертсе пымалли ĕçĕн техникине пуринчен малтан хăйсем вĕренсе пыма ыйтакан большевиксен тивĕçлĕхĕпе, ВЛКСМ Центральный комитечĕн работникĕсем 1933 çулхи майăн 14—15-мĕшĕсенче самолет çинчен парашютсемпе сикнĕ.

ВЛКСМ Центральный комитечĕн ертсе пыракан работникĕсем парашютпа сикни нумай

миллионлă ленинла комсомола питĕ паха пример кăтартса панă. Çаксене тунă хыççăн „Комсомольская правда“ хаçатра тухнă статьясем комсомолецсене парашют ĕçне вĕренме чĕннĕ тата Осоавиахимран пирĕн çĕршывра массăллă спорт парашютизмне тата анлăрах сарса яма ыйтнă.

Нимĕн иккеленмелли те çук, çак чĕнӳсем парашютистсем хатĕрлекен аслă шкула организацилессине хăвăртлатнă. Тепĕр енчен, вĕсем комсомол массине хускатса янă, çавăн хыççăн самолет çинчен сикме ыйтса, парашютистсен кружокне организацилеме тата парашют вышкисем тума ыйтса паракан заявкăсен хисепĕ калама çук нумай ӳссе кайнă.

Хальхи вăхăтра, Совет Союзĕн территоринче пиншер парашютист-спортсменсем, çĕршер парашют кружокĕсем тата станцисем, парашют вышкисем пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ вăхăтра, çав çитĕнӳсемшĕн, вĕсем ытла çителĕклех пулмасан та, эпир комсомол ăрăвне ертсе пыракансен паха примерĕсене пула хускатса янă комсомол пуçарулăхне тав тума тивĕçлĕ.

ЦК ВЛКСМ совет парашютизмне кулленех

ĕçре ертсе пыни тата контрольлесе пыни со-
вет парашютизмне тĕрĕс çулпа хăвăртрах
малалла аталанма май парать.

ЦК ВЛКСМ парашютпа сикессине комсо-
молăн çар-техника экзаменĕн комплексне
кĕртме йышăннă постановлени питĕ кирлĕ
мероприяти пулса тăрать. Çак постановлени
парашютизма çывăх вăхăтрах ĕççынни çам-
рăкĕсен чăн-чăн массăллă спорчĕ тăвĕ.

---

## ТУПМАЛЛИ

### Малтанхи утӑмсем

*Стр.*

Парашют пуҫланса кайни тата унпа чи малтан сикнисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Парашютпа практикӑра усӑ курма тытӑнса пӑхни 6
Парашют спорт ӗҫӗнче . . . . . . . . . . . . . 10

**Парашют—ҫӑлӑнмалли, ӳксе вилесрен хӑтӑлмалли аппарат**

Авиаци ӗҫӗ хытӑ сарӑлнӑ тапхӑрти парашют . . 16
1914—1918 ҫулсенчи тӗнче вӑрҫинче парашютпа усӑ курни . . . . . . . . . . . . . . . 18
Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи парашют . . . . . . . . . . . . 22

**Парашютпа усӑ курни**

Летчиксене парашютпа сикме вӗрентни . . . . 29
Инструкторсем сӑнавла сикни . . . . . . . . . 31
Парашютпа вӑрҫӑра усӑ курасси . . . . . . . . 33

**Парашют ССР Союзӗнче**

Парашют тӗнче вӑрҫипе интервенци вӑхӑтӗнче . 36
Парашют совет авиацийӗнче . . . . . . . . . . 38
Тренировка тӑвас тӗлӗшпе сикнисем тата парашютизма пропагандӑлани . . . . . . . . . . 40
Спорт парашютизмӗн аталанӑвӗ . . . . . . . . 44
Совет парашютизмӗн инструкторӗсем . . . . . . 46
Пирӗн парашют конструкторӗсем . . . . . . . . 50
Спорт парашютизмӗн рекорчӗсем . . . . . . . 52
Парашют спорчӗ аталанӑвӗнчи комсомол ӗҫӗ . . 60

Редактор Н. С. СТЕПАНОВ

НТ2691
Тираж 3000 экз.
Формат бумаги 60×92 1/32
Подписано к печати 10/III 1941 г.
Учет.-авторских л. 2
Заказ № 47

Типография № 2. Управления
Издательств и Полиграфии при
СНК ЧАССР. г. Алатырь.

Цена 75 коп.

Л. МИНОВ

ПУТЬ ПАРАШУТА

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
Чебоксары ◆ 1941